CC BY


***Владимирова Ольга Геннадьевна***
канд. филол. наук, доцент
ФГБОУ ВО «Чувашский государственный
университет им. И.Н. Ульянова»
г. Чебоксары, Чувашская Республика

# ПОЭТИЧЕСКОЕ МАСТЕРСТВО СЕМЕНА ХУММЫ

***Аннотация**: в статье анализируется своеобразие лирики известного чувашского прозаика Семена Хуммы (Фомина), раскрываются метро-ритмические особенности его стихотворений. Утверждается, что поэзия С. Фомина представляет собой синтез силлабики и силлабо-тоники.*

***Ключевые слова**: поэтическое мастерство, Семен Хумма (Фомин), ритм, рифма, чувашская поэзия.*

***Аннотаци**: статьяра чӑваш халӑхӗн паллӑ прозаикӗ Хумма Ҫеменӗ ҫырнӑ лирикӑлла хайлавсен хӑйевӗрлӗхне тишкернӗ, сӑвӑри кӗвӗ-ҫемӗ йӗркеленӗвне тимленӗ.*

***Тӗп сӑмахсем:** ритм, поэзи ӑсталӑхӗ, Хумма Ҫеменӗ, рифма, чӑваш поэзийӗ.*

Хумма Ҫеменӗн пултарулӑхӗ литература каҫалӑкӗнче нумай енлӗн ӳкерӗнсе юлнӑ. Чӑвашсен сӑмахлӑ культуринче унӑн манӑҫми ячӗ проза ӑсти пулнипе палӑрнӑ пулин те, пуҫламӑш ӳсӗмӗн шыравне вӑл сӑвӑ хайлассинче тупнӑ. Ку ӗҫре ӑна уйрӑмах Ҫеҫпӗл Мишшин хӗмленсе тӑракан поэзийӗ хавхалану кӳнӗ. «Мана «Канаш» хаҫатра тухнӑ Ҫеҫпӗл сӑввисем килӗшеҫҫӗ. Тикӗс виҫепе уҫӑмлӑн, янӑравлӑн вуланаҫҫӗ унӑн сӑввисем. Темӗнле, чӑваш юрри-сӑввинче халиччен пулман ҫӗнӗлӗх пур вӗсенче. Поэзи асамлӑхӗ те пур… Ҫав сӑвӑсемпе хавхаланса хам та сӑвӑсем ҫырма пикентӗм», – пӗлтернӗ вӑл Ҫемен Элкере 1920 ҫулта Хусанти педагогика курсне вӗренме килсен.

Хумма Ҫеменӗн малтанхи сӑввисем Чӗкеҫ псевдонимпа «Канаш» хаҫатра ҫапӑннӑ. 1922 ҫулта «Юрӑ-сӑвӑсем» ятпа уйрӑм кӗнекен пичетленнӗ. Унсӑр пуҫне поэтӑн Чӑваш патшалӑх гуманитари институчӗн архивӗнче «Ирхи чечек


Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

(кӑмӑла килнӗ юрӑ-сӑвӑсем)» ятпа кӗнекен кӑларма хатӗрленӗ сӑвӑсен пуххи те упранать.

Хумма Ҫеменӗ пурӑннӑ самана таппи марш евӗрлӗ, сулмаклӑ виҫепе каласма хистенӗрен-тӗр, поэт хӑйӗн сӑввисене Ҫеҫпӗл майлӑ ҫырма тӑрӑшни куҫ кӗретех сисӗнет. Ытларах чухне сӑвӑҫ кивӗ пурнӑҫа, патша саманине питлет, ҫӗнӗ вӑхӑта хапӑл туса саламлать:

Салам сана, килес тӗнче,

Васка, васка эс ҫул ҫинче!

Сана кура ҫӗр кисренет…

Патши пӗтет, тӳрри вилет.

Ҫут ҫанталӑк илемӗпе вӑрттӑнлӑхне туйма, унпа киленме пӗлекен поэтӑн чун тӑрӑмӗ ҫепӗҫ те ачаш пулни юрату ҫинчен шӑрҫаланӑ сӑвӑ йӗркисенче сисӗнет:

Каҫхи пӗлӗт тӳпинче

Тупрӑм эп сана.

– Эсӗ манӑн ҫӑлтӑр-ҫке!

Терӗм эп вара.

Хумма Ҫеменӗ халӑх сӑмахлахӗпе кӑсӑкланни те паллӑ. Вӑл чӑваш ялӗсем тӑрӑх ҫӳресе юрӑсемпе такмаксем, юмахсем пухнӑ. Ҫавӑнпах-тӑр унӑн пултарулӑхӗнче халӑх юрри майлӑ сӑвӑсем чылай:

Ирхи сывлӑм типиччен

Ҫырла татса юлар-и?

Ҫамрӑк ӗмӗр иртиччен

Пӗр савӑнса юлар-и?

Сӑввисен сӑнарлӑхне тата ҫемӗпе састаш кӗвӗлӗхне Ҫеҫпӗл шайӗнче ӑсталайманнине, ман шутпа, Хумма Ҫеменӗ хӑй те туйнӑ. Ҫакна поэт Ҫеҫпӗл сӑввисене пысӑк хак пани тӳрре кӑларать: «Сӑвӑ техники вулама та ҫӑмӑллипе, илемлипе те, тата сӑвӑсен техникине ҫӑмӑл тума пӗлнипе, Ҫеҫпӗл Мишши вырӑссен – Пушкинӗпе, Лерморовӗпе, французсен – Виктор Гюгопа, Ламартинпа тата ыттисемпе те танлашать, анчах шухӑшӗпе хӑйӗн пӗтӗм чӗринчен юхса


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

тухса çав тĕрлĕ илемлĕ, ют çын чĕрине витĕрех çыпăçакан сăвăллă пулакан шухăшĕпе, хăйĕнле çеç таланчĕпе Çеçпĕл Мишши пек поэт ют халăхсен поэзинче кам пур-ши? Тем чул ларсан та, тем чул шырасан та, ун пек поэта эпĕ пĕр эрмен поэзинче анчах пĕлетĕп. Ячĕ унăн – Петрос Дуриан» [4, с. 15].

Талантлă поэтсенчен тĕслĕх илсе Хумма Çеменĕ хăйĕн сăввисенче те сăмах янăравлахне çивĕччĕн пиçĕлеме тăрăшнă:

Хĕрлĕ ялав çĕр çинче
Вĕл-вĕл туса вĕлкĕшет,
Çĕрĕк тĕнче выраннне
Çĕнĕ тĕнче çитĕнет.

Хумма Çеменĕн сăввисем ытларах чăваш сăвви виçи малашлăхĕшĕн пынă тавлашу вăхăтĕнче çырăннă. Çавна май вăл сăвă техникин хăш çулĕ (силлабика, силлабо-тоника) чăваш поэзийĕшĕн кăтартуллă пулни пирки чылай шухăшланă. Ятарласа «Чăвашла стихсен техники çинчен» (1923) ятлă доклад хатĕрленĕ. Хальхи чăваш литература пĕлĕвĕнче асăннă тĕпчеве тишкернĕ ĕçсем те пичетленнĕ [1–3].

Хумма Çеменĕ хăйĕн докладĕнчи иккĕленеĕвĕн никĕсне, ман шутпа, хăй хайлавĕсенчех тупнă: поэт сăввисене силлабо-тоника виçипе çураçтарса çырма тăрăшнă пулин те, чылай чух силлабикăпа силлабо-тоника хутăшса каяççĕ. Ку пулăм поэт хăнăхнă халăх сăвви виçинчен часах хăтăлайманнине систерет.

Çавăн пекех Хумма Çеменĕ хăйĕн тĕпчевĕнче чăваш поэзийĕнчи хутăш картсемпе çырнă сăвăсем (метрлă сăвăсем) тĕл пулнине те палăртать. «Тырă вырмара» сăвăра асăннă тĕслĕхе асăрхама пулать:

Кăвак пĕлĕт кăваккăн
Шыв çине ÿксен,
Хĕвел, эсĕ çунатăн, -
Çÿлтен пĕçертен.

Ку çавра силлабо-тоника виçипе кĕвĕленмен пулин те, яка вуланать. Анчах та вăрăммăн илтĕнекен сыпăксем кĕскен илтĕнекен сыпăксемпе тĕрĕс йĕркеленсе пырайманни силлабика-тоника саккунне хирĕçлет.


Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Вăхăт иртнĕçемĕн Хумма Çеменĕ Çеçпĕл силлабо-тоники чăваш сăввишĕн кăтартуллă пулнине ăша хывса «Сонет» ятлă хайлав çырать. Ăна 1925 çулта «Сунтал» журналта пичетлет. Чăваш литературинче сонет жанрĕ 1940 çулсенчен вăй илнине шута илсен, Хумма Çеменне тăван чĕлхепе пуçласа сонет çыраканĕсенчен пĕри тесе каласан та йăнăш мар-тăр.

Сăмахăмăра çирĕплетме Хумма Çеменĕ çырнă «Сонет» йĕркисемпе паллашар:

Икĕ хутлă шурă çуртăн шурă пӳлĕмне
Электрица лампочкийĕ çутă çутнă чух,
Иккĕн эпĕр… иккĕн вăрттăн пăшăлтатнине
Сассăр сывлăш итлесессĕн, эсĕ: «Ай, турух!» –
Терĕн ятăн çăмăлттайăн çăмăл юррине.
– Турă пур вăл, ан чĕн хирĕç, айтăр венчете! -
Терĕн хыттăн, пуç устармăш, эсĕ – ух-ху-у-ух!
Шухăшларăм, ăш каларĕ: «Паттăр пул, Пракух!..»
Çав çĕр хыççăн, эсĕ, чунăм, нимсĕрех мана:
– Хыт чĕреллĕ… юратмастăн, – терĕн çиленсе…
Иртрĕ Вăхăт. Çĕнчĕ ĕнтĕ çĕнĕ самана.
Шухăшсем те çĕнчĕç… килчĕç ĕнтĕ çĕнелсе.
Эс те, сар хĕр, халĕ ĕнтĕ урăхлантăн çак:
– Венчете айта тесе те, – каламастăн ак.

Паллах, Хумма Çеменĕн хайлавĕ содержанийĕпе те, формипе те классикăлла сонет картне ларайман. Виçе енчен пăхсан сăвă таса силлабо-тоникăпа, çичĕ картлă хорей виçипе çырăннă. Састашсен кăткăс ылмашăвĕ те ăнăçлă пулса тухнă. Йĕркесенче час-часах тĕл пулакан юнашар икĕ пусăмсăр сыпăк (пиррихи) автор туйăмĕпе сăвă чĕлхине ятарласах тимлеме хистет.

Сонет кăшăлне çыхнă чух форма ыйтăвĕсене мала хунăран-тăр, сăвăра тăтăшах *ĕнтĕ* сăмах черетленет. Апла пулин те, вăл хайлав содержанине сапаласа ямасть.

Хумма Çеменне сăнар тăвас ăсталăхпа кĕвĕ-çемĕ йĕркелес туртăмсене ăша хывма вырăс тата тĕнче литературин классикĕсене юратса вулани, вĕсен сăвви-


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

сене тӑван чӗлхене куҫарни те витӗм кӳнех. Ытларах вӑл вырӑссен Кольцовне, тутарсен Тукайне, латышсен Райнисне чӑвашла куҫарнӑ е вӗсем майлӑ ҫырма тӑрашнӑ.

Тӗслӗх вырӑнне Габдулла Тукайӑн «Поэт» сӑввин куҫарӑвне тимлер:

Сӑввӑмсен вутти ӑшӑмра чӗрӗ пулсанах,
Ватӑлсан та сӑртсене эп хатӗр хӑпарма.
Ӑшӑмра ялан ман ҫутӑ… ҫутӑ кун,
Сивӗ хӗл те унта сивӗ юрне тултармасть.
Пока огонь стиха горит в груди моей,
Я годен для борьбы, я старости сильней.
Ясна душа певца, весна в душе навек,
Она не знает зим, ее не тронет снег.

Хумма Ҫеменӗ куҫарусенче сӑвӑ формине упраса хӑварассишӗн тӑрӑшсах кайманни, хайлав содержанине оригиналти пек тытса пырассишӗн ӑнтӑлни сисӗнет.

Ҫапла вара, Хумма Ҫеменӗн пултарулӑх шыравӗ анлӑ пулнине палӑртмалла. Унӑн сӑввисен йышӗ пысӑках мар пулин те, вӗсем паянхи кун та хӑйсен пахалӑхне упраҫҫӗ, вулакана чун хӗрӳлӗхӗпе илӗртеҫҫӗ.

***Список литературы***

1. Владимирова О.Г. Выражение особенностей диалекта малой родины в ритмике чувашских поэтов // Чувашский язык и литература: теория и методика: сборник статей. – Чебоксары: Изд-во Чуваш. гос. пед. ун-та, 2016. – С. 107–110.

2. Владимирова О.Г. Становление и развитие чувашского силлабо-тонического стиха: автореф. дис. … канд. филол. наук. – Чебоксары, 2004. – 23 с.

3. Владимирова О.Г. Становление и развитие чувашского силлабо-тонического стиха: дис. … канд. филол. наук. – Чебоксары, 2004. – 190 с.

4. Фомин С. М. Кузьмин (Михаил Сеспель) // Фомин С. Штрум. Суйласа илнисем. – Шупашкар: Чӑваш. кӗн. изд-ви, 1975. – 362 с.



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

5. Фомин С. Чăвашла стихсен техники çинчен // Литература еткерĕ: статьясен пуххи / ЧПГĂИ. – Шупашкар, 1991. – С. 55–61.


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)